25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
МАЙ
6
ЮНКУН
103(6038) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Пĕтĕм вăя—Сталин юлташăн приказне пурнăçлама!

Сталин юлташăн майăн пĕрремĕшĕнче кăларнă приказĕ — питех те пысăк çырăн йышăнса тăракан документ. Вăл тăван çĕршыва паттăррăн хўтĕлекенсен ретне, мĕнпур совет çыннисен ретне, вĕсене хăйсен тăван çĕршывĕн числăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн пыракан кĕрешўре тата ĕçре çĕнĕ çитĕнўсем туса хавхалантарса, çĕнĕ вăйсем кĕртет.

Сталин юлташăн приказĕ — тăван çĕршывăн боевой заданийĕ, вăл совет çыннисемшĕн закон пулса тăрать. Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе командирĕсем, рабочисемпе работницăсем, хресченсемпе хресчен хĕрарăмĕсем, интеллигентла ĕçĕн çыннисем, партизансемпе партизанкăсем çулпуçăн приказне чыслăн пурнăçлас тесе пурне те тăвĕç. Фашистла вăрă-хурахсемпе пусмăрçăсене курайманнин вут-хĕмĕпе çунакан совет çыннисем 1942 çулта тăшмана тĕппипех аркатса тăкас ĕçе вăйсене шеллемесĕр хатĕрлĕç, çĕнтерĕвĕн çутă кунне çывхартĕç.

Совет çĕршывĕнчи ĕççыннисем фронтри боецсемпе пĕр пурнăçпа пурăнаççĕ. Отечественнăй вăрçă испытанийĕсем фронтпа тылăн пĕрлĕхне татах та çирĕплетрĕç. Тăшмана çĕнтерес тесе совет çыннисем кирек мĕнле йывăрлăха та тўссе ирттерме хатĕр. Тылри работниксем фронта пулăшассине кунран кун вăйлатма тивĕçлĕ. Тунă çитĕнўсемпе лăпланса лармалла мар! Çĕнтерĕве пĕр чарăнмасăр ўстерсе пымалла!

Хĕрлĕ Çара винтовкăсем, пулеметсем, орудисем, минометсем, танксем, самолетсем, боеприпассем ытларах кирлĕ. Юратнă çулпуçăн приказĕ çине рабочисемпе работницăсем фабрикăсемпе заводсенче хастарлă ĕçленипе, çĕнĕ çĕнтерўсем тунипе ответлеççĕ. Партире тăракан тата партире тăман агитаторсен, пичетĕн таса тивĕçĕ — пирĕн тăван çĕршыв умĕнче тăракан пысăк задачăсене ĕççыннисене пĕрмаях ăнлантарса парасси, çав задачăсене кашни предприятире куллен пурнăça кĕртсе пымалла тăвасси.

Фабрикăсемпе заводсенчи социализмлă ăмăрту оборона продукцине ўстермелли [illegible]

[illegible]

Оборона Халăх Комиссарĕн майăн пĕрремĕшĕнчи кăларнă приказĕнче [illegible]

Большевикла агитаци вăйĕ — унăн витĕмлĕхĕнче. Агитаторăн кашни калаçăвĕ, доклачĕ [illegible] фронта пулăшассине вăйлатни пулмалла.

Совет пичечĕ умĕнче пысăк та ответлă задачăсем тăраççĕ. Большевикла пичет [illegible] Ленин—Сталин партийĕ [illegible]

1942 çулта нимĕçсен фашистла войскисене [illegible] Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташ [illegible]

сем тата ытларах витĕмлĕ, ăнланмалла, хумхантармалла пулмалла.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче çапăçусен çулăмĕнче çар пичечĕ çуралса çирĕпленчĕ. Унăн авторĕсен кадрĕсем шăтса ўсрĕç, вăл боецсемпе, командирсемпе тата политработниксемпе çыхăну тытасси вăйланчĕ. Хĕрлĕ Çар воинĕсем фронтри пичете тивĕçлипе юратаççĕ. Фронтри хаçатсем умне халĕ çĕнĕ те пысăк задачăсем тухса тăчĕç.

Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар умне, унăн боецĕсем, пулеметчикĕсемпе артиллерисчĕсем, минометчикĕсемпе танкисчĕсем, летчикĕсемпе кавалерисчĕсем умне çар ĕçне тимлĕн вĕренес задача лартрĕ. Хĕрлĕ Çар вăрçă пуçланнă чухнехинчен пĕрлĕхлĕрех те вăйлăрах пулса тăчĕ. Унăн кадрĕсем — боецсемпе командирсем пиçĕхсе ўсрĕç. Çарпа çĕршыв отечественнăй вăрçă геройĕсемпе, хăйсен ĕçĕн чаплă мастерĕсемпе мухтанаççĕ. Вĕсем, çав геройсем, кирек хăш чаçре те, кирек хăш соединенире те нумай. Ытти воинсем çак çынсем пек пулччăр, вĕсенчен вĕренччĕр, вĕсемпе танлашчăр тесе, вĕсен мухтавне сарни, вĕсен опытне пропагандăлани, — çакă вăл тăшмана çĕнтерме вĕренсе çитнĕ çынсен çарне çĕр хут ўстерннне пĕлтерет. Çакна вара çарти кашни хаçат тума пултарать тата ăнăçлăн тума тивĕçлĕ.

Вуншар, çĕршер фабрикăсемпе заводсем, ĕçре пуçарулăх кăтартакан пиншер çынсем, вăрçă вăхăтĕнчи стахановецсем промышленность оборудованипе лайăхрах усă курассишĕн, ĕç тухăçлăхне ўстерессишĕн большевикла кĕрешнин тĕслĕхĕсене кăтартаççĕ. Çак опытпа пур предприятисем те, пур рабочисемпе работницăсем те усă курмалла тăвасси, ĕçĕн лайăх меточĕсене промышленноçа анлăн кĕртесси — агитаторсемпе хаçатсен кирлĕрен те кирлĕ задачисенчен пĕри пулса тăрать.

Пирĕн фронт заказĕсене пурнăçламан пĕр фабрика та, пĕр завод та пулмалла мар. Завод, цех юлса пыни хуçалăх руководителĕсемпе парти организацисен ĕçĕнчен çеç мар, вĕсен органĕсен—хаçатсен ĕçĕнчен те килет.

Хĕрлĕ Çара тырпул, аш-какай, пулă, пахча-çимĕç [illegible]

[illegible]

Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташăн приказĕ—историлле питех те пысăк [illegible]

(«Правда» умстатьи, майăн 4-мĕшĕ).

Чăваш республикинчи ĕççыннисен делегацийĕ фронтра

ХЕВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, майăн 5-мĕшĕ. (Хамăрăн корреспондентран, телефонпа). Чăваш республикинчи ĕççыннисен делегацийĕ фронтра Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе, командирĕсемпе тата политработникĕсемпе тĕлпулу туса ирттерчĕ. Тĕлпулу пысăк хавхаланупа иртрĕ. Боевой активан канашлăвĕнче [illegible] Чăваш республикинчен килнĕ делегатсем воинсене Чăваш республикинчи ĕççыннисен фронта мĕнле пулăшни çинчен калаçса пачĕç. Чаплă ларура Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ Хĕрлĕ Çар боецĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине пачĕ. Хисеплĕ грамотăна илме тивĕçлĕ пулнă воинсем хушшинче пирĕн земляксем: Кудрявцева, Ананьев, Алякин, Эрре юлташсем. Делегатсем малти позицисене çитсе курчĕç.

СЕРГЕЙ МАКАРОВ.

Хĕрлĕ Çарăн высши начальствăн составне çар званийĕсем парасси çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать:

Хĕрлĕ Çарăн высши начальство составĕнчи аялта асăннă çынсене СССР Верховный Совет Президиумĕн 1940 çулти майăн 7-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх тунă çар званийĕсене парас:

ГЕНЕРАЛ-ЛЕЙТЕНАНТ ЗВАНИНЕ

Василий Иванович **Виноградова**
Дмитрий Николаевич **Гусева**
Павел Петрович **Корзуна**
Иван Федорович **Николаева.**

АРТИЛЛЕРИ ГЕНЕРАЛ-ЛЕЙТЕНАНЧĔН ЗВАНИНЕ

Петр Емельянович **Гудименкăна.**

ГЕНЕРАЛ-МАЙОР ЗВАНИНЕ

Андрей Матвеевич **Андреева**
Феликс Рафаилович **Балтушис-Жемайкиса**
Сергей Тимофеевич **Ниякова**
Павел Михайлович **Богданова**
Михаил Дмитриевич **Борисова**
Федор Андреевич **Волкова**
Михаил Иосифович **Глинские**
Владимир Алексеевич **Глуздовские**
Андрей Сидорович **Головкăна**
Дмитрий Яковлевич **Григорьева**
Николай Иванович **Григорьева**
Иван Тихонович **Гришина**
Михаил Данилович **Гришина**
Степан Савельевич **Гурьева**
Кузьма Николаевич **Деревянкăна**
Семен Иванович **Донскоя**
Михаил Емельянович **Ерохина**
Дмитрий Петрович **Жебровские**
Павел Иванович **Зырянова**
Иван Никифорович **Кирюшина**
Александр Яковлевич **Киселева**
Николай Сергеевич **Киселева**
Александр Алексеевич **Кичкайлова**
Георгий Кириллович **Козлова**
Федор Иванович **Колесникова**
Иван Андреевич **Копяка**
Геннадий Петрович **Короткова**
Николай Михайлович **Мальшева**
Иван Ильич **Миссана**
Николай Афанасьевич **Москвина**
Александр Николаевич **Нечаева**
Иван Сергеевич **Панкина**
Дмитрий Иванович **Самарские**
Павел Ефимович **Свиридова**
Алексей Гордеевич **Селиванова**
Владимир Александрович **Соловьева**
Михаил Павлович **Спирина**
Иван Данилович **Черняховские**
Филипп Михайлович **Черокманова**
Петр Николаевич **Чернышева**
Иван Степанович **Шмыгона.**

АРТИЛЛЕРИ ГЕНЕРАЛ-МАЙОРĔН ЗВАНИНЕ

Петр Максимович **Бескровныя**
Александр Павлович **Егорова**
Михаил Семенович **Михалкина**
Владимир Степанович **Нестерука**
Георгий Федотович **Одинцова**
Александр Никифорович **Панкова**
Иван Миронович **Пядусова**
Евгений Иванович **Яковлева.**

АВИАЦИ ГЕНЕРАЛ-МАЙОРĔН ЗВАНИНЕ

Михаил Михайлович **Громова**
Николай Акимович **Журавлева**
Николай Иванович **Кроленкăна**
Андрей Яковлевич **Кузнецова**

ТАНКОВĂЙ ВОЙСКĂСЕН ГЕНЕРАЛ-МАЙОР ЗВАНИНЕ

Василий Герасимович **Буркова**
Василий Васильевич **Буткова**
Иван Петрович **Корчагина**
Петр Петрович **Павлова**
Алексей Григорьевич **Родина**
Петр Георгиевич **Чернова.**

ИНЖЕНЕРНĂЙ ВОЙСКĂСЕН ГЕНЕРАЛ-МАЙОР ЗВАНИНЕ

Анатолий Васильевич **Бабина.**

ТЕХНИКАЛЛĂ ВОЙСКĂСЕН ГЕНЕРАЛ-МАЙОР ЗВАНИНЕ

Михаил Васильевич **Данченкăна**
Николай Степанович **Матвеева**
Александр Васильевич **Силярова**
Василий Васильевич **Столярова**
Иван Петрович **Тягунова.**

ÇЫХĂНУ ВОЙСКИСЕН ГЕНЕРАЛ-МАЙОР ЗВАНИНЕ

Борис Филиппович **Дудакова**
Павел Федорович **Угловские.**

ИНТЕНДАНТСКИ СЛУЖБĂН ГЕНЕРАЛ-МАЙОР ЗВАНИНЕ

Александр Поликарпович **Воробьева**
Николай Кузьмич **Зверькова**
Николай Николаевич **Карпинские**
Наум Маркович **Левентова**
Исай Яковлевич **Рывкина.**

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. СТАЛИН.
СССР Совнаркомĕн Ĕçĕсен Управляющийĕ Я. ЧАДАЕВ.

Мускав, Кремль. 1942 çулти майăн 3-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çарăн войсковой чаçĕсене наградăласси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешў фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăça кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн наградăлас:

ЛЕНИН орденĕпе:

258-мĕш стрелковăй полка.

ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе:

Кавалерин 7-мĕш Гвардейски дивизине.
11-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизне
238-мĕш стрелковăй дивизне
18-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизне
5-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизне
9-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизне
1-мĕш Гвардейски стрелковăй бригадăна
64-мĕш стрелковăй бригадăна
2-мĕш Гвардейски стрелковăй бригадăна
2-мĕш Гвардейски танковăй бригадăна
112-мĕш танковăй бригадăна
Противотанковăй оборонăн 2-мĕш Гвардейски артиллерийски полкне
Противотанковăй оборонăн 3-мĕш Гвардейски артиллерийски полкне
РГК 1-мĕш Гвардейски артиллерийски полка
РГК 2-мĕш Гвардейски артиллерийски полка
Артиллерин 364-мĕш полкне
210-мĕш стрелковăй полка
518-мĕш стрелковăй полка
1-мĕш Гвардейски мотоциклетнăй полка
42-мĕш механизированнăй инженернăй уйрăм батальона
Артиллерин 196-мĕш уйрăм зенитнăй дивизионне.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти майăн 3-мĕш.

Оборона Халăх Комиссариатĕнче

180-мĕш стрелковăй дивизирен тата 38-мĕш истребительнăй авиаполкран Гвардейски чаçсем тăвасси çинчен

Тăван Совет Çĕршывĕшĕн, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче 180-мĕш стрелковăй дивизи тата авиацин 38-мĕш истребительнăй полкĕ паттăр та хăюллă, дисциплинăллă та организованно пулнине кăтартрĕç. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç татти-сыпписĕр çапăçса, 180-мĕш стрелковăй дивизи тата 38-мĕш истребительнăй авиаполк фашистла войскăсене питĕ пысăк сухатусем кўчĕç, аркатмаллах хăватлăн пыра-пыра çапса, противникăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтере-пĕтере пычĕç нимĕç захватчикĕсене пĕр хĕрхенмесĕр çапа-çапа аркатрĕç.

Тăван çĕршывшăн нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче хăюллă та паттăр, çирĕп те дисциплинăллă тата организованно пулнăшăн, çав чаçсен личнăй составĕ геройлăх кăтартнăшăн, асăннă чаçсенчен Гвардейски чаçсем тунă:

1) 180-мĕш стрелковăй дивизирен — 28-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизи — дивизи командирĕ полковник **И. И. Миссан.**

2) Авиацин 38-мĕш истребительнăй полкĕнчен — авиацин 21-мĕш Гвардейски истребительнăй полкĕ — полк командирĕ майор **П. И. Ожередов.**

Асăннă дивизипе авиаци полкне Гварди ялавĕсем параççĕ.

Тимĕр-тăмăр пухаççĕ

ИШЛЕЙ. Ялсенчи комсомолецсемпе çамрăксем оборона промышленноçĕ валли тимĕр-тăмăр пухаççĕ. Юлашки вăхăтра Хăймалакасси ялсоветĕнчи çамрăксем 500 килограмм, «Клевер» тата «Труд» колхозсенчи комсомолецсем 450 килограмм, Кибечкассинчи пионерсем 250 килограмм тимĕр-тăмăр пухса пачĕç. Çак ĕçе Алинăри тата Явăшри çамрăксем те хутшăнчĕç. Районĕпе пурĕ 22 тонна ытла тимĕр-тăмăр пухнă.

Анчах, калас пулать, пухнă тимĕр-тăмăра кирлĕ çĕре леçес тĕлĕшпе райпотребсоюз начар ĕçлет.

З. МИТРОФАНОВА.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 4-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерў

Майăн 4-мĕшĕнче фронтăн хăшпĕр участокĕсенче пирĕн войскăсем тăшмана хирĕç çапăçса наступлени тунă, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

Майăн 3-мĕшĕнче нимĕçсен 12 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 8 самолет пĕтнĕ.

* * *

Майăн 3-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 42 автомашинине, 5 полевой тата зенитнăй орудине, 9 минометне, 13 зенитнăй пулеметне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 5 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине пĕр ротăна çити салаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Иртнĕ эрне хушшинче, апрелĕн 26-мĕшĕнчен пуçласа майăн 2-мĕшне çитиччен, нимĕç авиацийĕн 264 самолет пĕтнĕ, пирĕн çав вăхăт хушшинчех 71 самолет пĕтнĕ.

* * *

Ленинград фрончĕн уйрăм участокĕсенче кĕрешекен пирĕн чаçсем тăшманăн 10 дзотне, 2 наблюдательнăй пунктне çĕмĕрнĕ, 2 полевой орудине, пĕр бронемашинине, 5 станковăй пулеметне, 2 минометне пĕтерсе тăкнă, боеприпассен икĕ складне тата горючин пĕр складне сирпĕнтерсе янă. Çапăçу хирĕнче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 1100 çын вилсе юлнă.

* * *

Противник халăх пурăнакан Д. пунктта атакăланă (Калинин фрончĕ). Пирĕн боецсем контратака туса нимĕçсене каялла сирсе ярахнă. Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 4 оруди, 7 автомашина, 20 винтовка. Гитлеровецсене 100 çынна ытла вĕлернĕ. Нимĕçсен салтакĕсем темиçе вуншар çын хăйсен ирĕкĕпе пирĕн енне каçса тыткăна парăннă.

* * *

Лански юлташ командир пулса ертсе пыракан гвардейски чаçри артиллеристсем нимĕçсен пĕр танкне, 12 пулеметне, 3 минометне тата 17 блиндажне пĕтерсе тăкнă. Артиллеристгвардеецсем противникăн пехотине пĕр батальон ытла салаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Смоленск облаçĕн районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен «Лазо» ятлă отрячĕ юлашки 8 эрне хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен фашистла захватчикĕсене чылай пысăк сухатусем кўнĕ. Партизансем, Германи войскисен подразделенийĕсене темиçе хут та пыра-пыра çапса, гитлеровецсене 600 çынна ытла вĕлернĕ, нимĕçсен 89 салтакне тыткăна илнĕ. Хăюллă совет патриочĕсем нимĕçсен пехотăпа çар пруçĕсем турттарса пыракан 15 автомашинине пĕтерсе тăкнă, 2 кĕпере, япаласен складне тата боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă. Нимĕçсен обозĕн хуралне çĕмĕрсе тăкса, партизансем противникăн пулеметсем, винтовкăсем, пистолетсем тата патронсем тиенĕ 60 лавне тата обмундированине 300 комплект тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 297-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 524-мĕш полкăн 9-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Иосиф Ланц çапла каласа панă: «Февраль уйăхĕ çитиччен эпĕ Австрире пулнă. Фашистсем пирĕн халăха чуралантарнă. Гитлер режимĕпе килĕшмен австриецсем нумайĕшĕсем нимĕн паллисĕр сухалчĕç. Темĕн пек хаяр террор пулсан та, фашистсене хирĕç кĕрешекенсен активлăхĕ кунсеренех ўссе пырать. Венăри предприятисенче темĕн чухлĕ листовка саланать. Çав листовкăсем Гитлера сирпĕтсе антарса, власа пĕтерсе лартма чĕнеççĕ. Çав листовкăсене кам тата хăçан тăрашса çўренине полици те, темĕн чухлĕ шпионсем те тупма пултарайман. Фронтран татти-сыпписĕр аманнă салтаксене турттаракан поездсем килсе тăраççĕ, çавăн пекех тата вилнисем çинчен пĕлтерекен хутсем те вĕçĕмсĕрех килеççĕ. Çакă вăл вĕçне çитнĕ лару-тăрăва татах та ытларах çивĕчлетет».

* * *

Калинин облаçĕнчи халĕ нимĕçсенчен ирĕке кăларнă Горки ялĕнчи çынсем хăйсен ялĕнче гитлеровецсем вырăнти совет халăхне çавтери тискеррĕн асаплантарса мăшкăллани çинчен каласа параççĕ. Нимĕçсем Мария Иванова колхозницăна кăкăр ĕмекен ачипе хăй пўртĕнчен хăваласа кăларса янă та пўртре хăйсем вырнаçнă. Пĕрре каçхине Иванова хăй пўртне шăнса кайнă ачине ăшăтас тесе пырса кĕнĕ. Фашистла ирсĕрсем пĕчĕк ачана çавăнтах урама юр çине кăларса пенĕ. Амăшĕ хирĕç тăма тытăнсан, гитлеровецсем ачана амăшĕ умĕнчех вĕлернĕ.

Майăн 5-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерў

Майăн 5-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче противник пехотин батальонĕ пирĕн оборона тытмалли рубежа йышăнса илме хăтланнă. Пирĕн боецсем, пăшалсемпе пулеметсенчен персе, нимĕçсен атакине сирсе пăрахнă, тăшмана пысăк сухатусем кўнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен виллисем нумай выртса юлнă. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн артиллеристсем 200 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Летчиксем—старши лейтенант Иваненков, кĕçĕн лейтенантсем Гухленкăпа Спиров юлташсем пирĕн çĕр çинчи войскăсен боевой йĕркисене хўтĕлесе тăнă. Часах вĕсем нимĕçсен 17 самолечĕ çывхарса килнине асăрханă. Хĕвел енчен пырса, пирĕн летчиксем противник самолечĕсен стройне çĕмĕрсе кĕрсе кайнă. Сывлăшри çапăçура «Юнкерс—87» йышши виçĕ самолета тата «Мессершмитт—109» йышши пĕр самолета персе антарнă. Пирĕн летчиксем хăйсен аэродромне пурте ăнăçлăн таврăннă.

* * *

Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа тăракан партизанла отряд, Смоленск облаçĕн территорийĕ çинче нимĕçсен фашистла войскисен тылĕнче кĕрешекенскер, майăн 1-мĕшĕнче халăх пурăнакан 2 пунктра нимĕç гарнизонĕсене атакăланă. 150 гитлеровеца вĕлерсе пĕтерсе, партизансем халăх пурăнакан пунктсене хăйсем йышăнса илнĕ. Партизансен тепĕр групи майăн 2-мĕшĕнче нимĕçсен пехотин батальонĕ çине тапăннă. Гитлеровецсем чĕрĕ вăй тĕлĕшпе пысăк сухатусем тўснĕ. Партизансем çакнашкал трофейăсем тытса илнĕ: пĕр оруди, 8 миномет, 4 пулемет, танксене хирĕç пемелли пăшал, 150 винтовка, 15.000 патрон, питех те нумай гранатăсем, 2 радиостанци тата продовольстви склачĕ.

* * *

Нимĕçсен 260-мĕш пехотнăй дивизийĕн 460-мĕш полкĕнчи 12-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ салтак Теодор Иессен çапла каласа панă: «Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне эпĕ апрель уйăхĕнче лекрĕм. Пире килсе çитнĕ-çитменех малти линие ячĕç. Вырăссен артиллерийĕ питех те вăйлăн персе тăнипе эпир нимĕн йĕркесĕр тарса саланса пĕтрĕмĕр. Вилнисемпе аманнисем кашни утăмрах йăваланса выртатчĕç. Кăшкăрнисемпе йынăшнисем пур енчен те илтĕнетчĕç. Çакă вăл питех те хăрушă пулчĕ. Эпĕ кăштах сывлăш çавăрсан пулемет патне шуса пытăм. Унта пулемет расчетĕнчи 7 çынран пĕр çын кăна тăрса юлнине куртăм, вăл та часах йывăр аманчĕ. Эпĕ блиндажа кĕрсе пыталтăм, унта 5 салтакпа пĕр санитар ларатчĕç. Тепĕр сехетрен блиндажа вырăс салтакĕсем кĕчĕç. Эпир алăсене çĕклерĕмĕр те тыткăна парăнтăмăр. Эпир халĕ хамăрăн пурнăçа çапла çăлса хăварнишĕн савăнатпăр».

* * *

Ростов облаçĕнчи Мясниково хуторĕнчен инçех мар красноармеецсен çунса кайнă 6 виллине тупнă. Вырăнти çынсем çапла каласа параççĕ: гитлеровецсем йывăр аманнă боецсене тыткăна илнĕ те вĕсене çунакан улăм капанĕ çине пăрахнă.

* * *

Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн В. М. Молотов юлташăн çак кунсенче пичетленсе тухнă нотинче гитлеровецсем вăхăтлăха оккупациленĕ районсенчи совет граждăнĕсене хăйсен чурисем туса хунине кăтартса паракан фактсене илсе кăтартнăччĕ. Германи пропаганди нимĕçсене çавăн пек айăпланине сирсе яма хăтланса пăхнă. Анчах та Германи информаци бюровĕнчи жуликсемпе шулерсем гитлеровецсен преступленисене пытарса хăварма пултараймаççĕ. Нимĕçсен «Франкфуртер цейтунг» ятлă фашистла хаçачĕ, 1942 çулти апрелĕн 16-мĕшĕнче, Германие ирĕксĕр илсе кайнă совет граждăнĕсен положенийĕ çинчен çырса, Германи правительствине айăпланине пĕтĕмĕшпех çирĕплетсе парать.

«Советăн оккупациленĕ облаçĕсенчи рабочисем йĕплĕ пралукран тытса çавăрнă лагерьсенче тăраççĕ, — тесе çырать хаçат. — Харьков районĕнчен Германие илсе килнĕ çав çынсене, паллах ĕнтĕ, хытăн тыткаламалла, вĕсене асăрхамалла, мĕншĕн тесен вĕсем хушшинче саботаж тума пултаракан большевиксем çук тесе нимĕнле те шутламалла мар. Вĕсен çывăхри начальникĕ, вĕсем хушшинче тăлмачă пулса тăраканскер, хăйĕн авторитетне вырăс чăпăркипе кăна тытса тăрать».

Хаçат малалла çакна кăтартса парать: хура ĕçри рабочисем вырăнĕнче нимĕçсем совет скульпторĕсене, художникĕсене, врачĕсене ĕçлеттереççĕ. Совет çыннисене, вĕсен мĕнле квалификаци пуррине пăхмасăрах, пурне те çавтери чухăн ĕçукри тўлеççĕ. Çав ĕçукри пĕтĕмпех налогсем тўлеве çĕре каять. Совет рабочийĕсем çине, каторжниксем çине лартса янă пек, клеме—«О» саспаллиллĕ лартса янă. Çакă вăл «хĕвел тухăçĕнчи рабочи» тенине пĕлтерет.

Уяр çанталăкăн кашни сехечĕне туллин усă курмалла

Хĕрсе ĕçлеççĕ

ЧКАЛОВСКОЕ, майăн 5-мĕш. (Хамăр корр., телефонпа). Паянхипе тăваттăмĕш кун ĕнтĕ районри малта пыракан «Звезда», Киров, Крупская, Ворошилов ячĕсемпе хисепленекен колхозсем типсе çитнĕ участоксенче çураки тăваççĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Майоров юлташ) 10 гектар сухаланă, сĕлĕ акнă. Сухаласенсем Е. Барышников, Н. Степанов юлташсем ĕç нормине 125—150-шар процент тултарса ĕçлеççĕ. Колхозра ĕнер пĕрлехутлă столовăй уçăлчĕ.

Крупская ячĕпе тăракан колхоз уйрăм участокенче 25 гектар, Киров ячĕпе тăракан тата «Звезда» колхозсем 25-шер гектар акрĕç.

Паян районри колхозсем çуракине массăллăн тухрĕç.

П. НИКОЛАЕВ.

* * *

ЯНШИХ-НОРВАШ, майăн 5-мĕш. (Телефонпа). Ямайкасси ялсоветĕнчи колхозсем çуракине хĕрӳллĕн пытăнчĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем суртырисене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа акса хăварас тесе пĕр минутăна çав ĕçрен уйрăлмасăр ĕçлеççĕ. Уйрăмах ĕçре Каганович ячĕпе тăракан колхоз малта пырать. Паянхи куна вăл 20 гектар сухаланă, 15 гектар акнă. Кашни колхозник ĕç нормине ытлашшипех тултарса ĕçлеме тăрăшать. М. Михайлов, И. Иванова, М. Алексеева, К. Прохоров, К. Петрова колхозниксем, кунне 1,20 гектар сухаламалла пулсан, 1,50—1,60-шар гектар сухалаççĕ, 3—4-шар ĕçкунĕ ĕçлесе илеççĕ.

Çавăн пекех «Потемкин» колхозра те çураки хĕрӳллĕн пырать, кунта столовăй лайăх ĕçлет.

З. МИТРОФАНОВА.

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, майăн 4-мĕш. (Телефонпа). Районри 64 колхозран 52-шĕ çуракине тухрĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем çуракинчи ĕçсене фронтри пек паттăр туса пыраççĕ, кашни сехете шута илсе, тăрăшса ĕçлеççĕ. Паянхи куна районĕпе 2100 гектар сухаланă, 1500 гектар акнă.

ВКП(б) ячĕпе хисепленекен колхоз (председателĕ Гурьянов юлташ) 65 гектар сĕлĕ, 17 гектар тулă акнă. Тепĕр икĕ кун иртсен колхоз çуракине вĕçлет. «Красное знамя» колхоз 60 гектар сĕлĕ, 16 гектар тулă акнă. «Профинтерн» колхозра колхозник Гусельщиков юлташ 11 ретлĕ сеялкăпа кунне 12-шер гектар тырă акать, плана тăхăр 7 гектар акмалла.

Н. СИДОРОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

СЕНТЕРВĂРРИ, майăн 4-мĕш. (Телефонпа). Çуртырисене акса пурĕ 39 колхоз тытăннă. Майăн 2-мĕш тĕлне пĕрремĕш тырăсене пурĕ 73 гектар акнă, 130 гектар сухаланă. Новинскри Сталин ячĕпе тăракан колхоз 6 гектар, Амачкинери «Красная звезда» колхоз 5 гектар, «Красный Волгарь» колхоз 4 гектар, Пушнарккассинчи «1-ое мая» колхоз 17 гектар сухаланă. Çĕнĕ Кушкинчи «Малалла» колхоз 3 гектар пăрçа акнă.

А. РАЗИН.

* * *

КУСЛАВККА, майăн 3-мĕш. (Телефонпа). Ĕнер районри 15 колхоз çуракине тухнă. Майăн 1-мĕшĕ тĕлне пурĕ 28 гектар сухаланă, 3 гектар культиваципеленĕ. Киров ячĕпе тăракан колхоз сĕлĕ акма тытăннă.

П. РУСИН.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Çитменлĕхсене халех пĕтермелле

ШАХАСАН, майăн 5-мĕш. (Телефонпа). Районри пылай колхозсем çуракине тухрĕç. Ямбахтăри «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз çураки ĕçĕсен планне 62 процент таран пурнăçланă та ĕнтĕ. Колхозниксем çуртырисене вăçăн йăлтах машинăсемпе акаççĕ.

— Колхозра фронтри пек ĕçлемелле. Эпир çуракине майăн 7-мĕш тĕлне вĕçлемĕшпех ăнăçлăн вĕçлесе çитерессишĕн тăрăшса ĕçлетпĕр. Планпа палăртнă тырăсене пĕтĕмĕшпех акса çитернĕ хыççăн, оборона фондне халăма тата нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене тăвалла пулăшу пама 5 гектар тырă акса хăваратпăр,—тет колхоз председателĕ Александров юлташ.

Колхозра агитаципллĕ-массăллă ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Агитаторсемпе вулакансем колхозниксемпе колхозницăсене партипе правительствăн постановленийĕсем çинчен ăнлантараççĕ, хаçатсенчи çĕнĕ хыпарсене вуласа параççĕ.

Çĕнĕ Малак ялсоветĕнчи колхозсенче те çураки ĕçĕсем ăнăçлăн пыраççĕ. Кунти колхозсем çуракине майăн 10-мĕшĕ тĕлне вĕçлеме шутлаççĕ. «Красный партизан» колхоз паянхи куна 36 гектар, Молотов ячĕпе тăракан колхоз 51 гектар, «Активист» колхоз 30 гектар акнă. Ку колхозсем пурте кĕрхи тырăсем калчисене апатлантарнă. «Активист» колхоз оборона фондĕ валли 2 гектар акса хăварнă.

Çавăнпа пĕрлех çуракинче япăх ĕçлекен колхозсем те пур. Акă, тĕслĕхрен, «Молодой колхозник», Чапаев ячĕпе тăракан тата «Комсомол» колхозсенех илер. «Молодой колхозник» колхозра (председателĕ Николаев) халĕ те акма хирлĕ вăрлăхсене тупса çитермен. Колхозра ĕç дисциплини япăх. Хăшпĕр колхозниксем ĕçе час-часах пăрахса хăвараççĕ. Ку колхозсенче çуракине ертсе пырас ĕçре ялти комсомолецсем, агитаторсем пуçарулăхĕ курăнмасть.

В. ЯКОВЛЕВ.

Оборона гектарĕсем акаççĕ

ЕТĔРНЕ, майăн 4-мĕш. (Телефонпа). Колхозсен уйхирĕсенче çураки пуçланчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем уйри ĕçсене пысăк çĕкленӳпе тухаççĕ, кăçал вăл юлса килнĕ çуркуннен уйрăмлăхне шута илсе, кашни сехетне ĕçлĕн усă курма тăрăшаççĕ, малтанхи кунсенчех паха тĕслĕхсем кăтартса хĕрӳллĕн ĕçлеççĕ. Колхозниксем çуракине пысăк пахалăхпа туса ирттерессишĕн, тăван çĕршыва пысăк тухăçлă тырпул туса парассишĕн çунаççĕ.

Краснодар крайĕнчи Выселковски районри Н. К. Крупская ячĕпе тăракан колхоз членĕсен чаплă пуçарăвне пирĕн районри колхозниксемпе колхозницăсем ырласа йышăнчĕç. Кубань тăрăхĕнчи колхозсем, çуракинчи ĕçсен планне ăнăçлăн пурнăçланисĕр пуçне, тăван çĕршыв оборонин фондне хывма, нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă тата малашне те ирĕке тухса пыракан районсенчи колхозсене тăвалла пулăшу пама оборона гектарĕсем акса хăварма йышăнни колхозниксемпе колхозницăсене пысăк хавхалану хучĕ.

ВКП(б) 17-мĕш съезчĕ ячĕпе тăракан колхоз членĕсем, Н. К. Крупская ячĕпе тăракан колхозăн чĕнӳллĕ çырăвне сӳтсе-явнă хыççăн, оборона фондне хывма планран ирттерсе 7 гектар çине тырă акса хăварма йышăнчĕç. Вăл шутра тулă, вир, пăрçа пĕрер гектар, сĕлĕ, çĕрулми иккĕр гектар пулать. Çавăн пекех Буденный ячĕпе тăракан колхоз та оборона фончĕ валли 6 гектар акма йышăннă.

А. КРАСНОВ.

* * *

СОВЕТСКОЕ. Нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене тăвалла пулăшу пама районри колхозсем çураки планĕнчен ирттерсе оборона гектарĕсем акса хăвараççĕ. Чуманкасси ялсоветне кĕрекен колхозсем пĕтĕмпе 6 гектар акаççĕ. Ямайкасси ялсоветне кĕрекен «Волна революции» колхоз — 5 гектар, «Восход» колхоз — 5 гектар, «Смычка» колхоз — 2 гектар акаççĕ.

Я. СИГАЙ.

* * *

КАНАШ. Районри колхозсем Краснодар крайĕнчи Н. К. Крупская ячĕпе тăракан колхоз членĕсем оборона гектарĕсем акма чĕнсе калаíнине ырласа сӳтсе-явнă хыççăн сĕнсе-ярĕç. Катеркин Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем оборона фончĕ валли 4 гектар, Чапаев колхоз — 6 гектар, Карăклăри «Броневик» колхоз—3 гектар, «Коминтерн» колхоз — 3 гектар, «Хĕрлĕ çăлтăр» колхоз — 4 гектар акса хăварма йышăннă.

Ф. МАЛЫШКИН.

* * *

ÇĔМĔРЛЕ. Çураки планне пурнăçланă хыççăн районри колхозсем оборона гектарĕсем акса хăварма паллă тăваççĕ. Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем, Краснодар крайĕнчи колхозниксен пуçарăвне ырласа, оборона фондне хывма 15 гектар акса хăварма йышăнчĕç. Çавăн пекех «Путь Ленина» колхозри колхозниксем те, кăçалхи çураки планне пурнăçланă хыççăн, оборона фончĕ валли 12 гектар, «Канаш» колхоз — 3 гектар, «Правда» колхоз — 6 гектар акса хăварма йышăннă.

«Правда» колхоз членĕсем Краснодар крайĕнчи колхозниксен чĕнĕвне пысăк хавхаланупа сӳтсе-ярĕç. 3-мĕш бригадăн бригадирĕ А. Фазалов юлташ пухура çапла каларĕ:

— Нимĕç фашисчĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи тăван колхозсене пулăшу парасси пирĕн тивĕç. Оборона гектарĕсем акса, вĕсене эпир тухăçлă тырпул туса парар.

Х. ЛИСИН.

* * *

ШАХАСАН, майăн 5-мĕш. (Телефонпа). Районри колхозсем Краснодар крайĕнчи Н. К. Крупская ячĕпе хисепленекен колхоз членĕсем чĕнсе каланине сӳтсе-ярĕç. Çĕршыв оборонин фондне хывма тата нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă колхозсене тăвалла пулăшу пама çураки планĕнчен ирттерсе оборона гектарĕсем акса хăварма йышăнчĕç. Киров ячĕпе тăракан колхоз оборона фончĕ валли 10 гектар, «Броневик» колхоз — 15 гектар акма йышăннă. Çавăн пекех Шуркассинчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз та çураки планĕнчен ирттерсе 5 гектар, «Канаш», «Красный пахарь» колхозсем — 4-шар гектар çурхи тырăсем акаççĕ.

Нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă колхозсене пулăшма районри колхозсем пурĕ 128 гектар ытла тырă акса хăвараççĕ.

В. Я.

Англири национальнăй ĕç совечĕ Майăн 1-мĕш ячĕпе чĕнсе калани

ЛОНДОН, майăн 2-мĕш. (ТАСС). Англири национальнăй ĕç Совечĕ Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе чĕнсе каланă. Çав чĕнӳре Англи рабочийĕсем гитлеризма тата фашизма хирĕç пыракан аслă кĕрешӳре пĕрлешнĕ мĕнпур Британи империйĕнчи, Индири, Совет Союзĕнчи, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи, Китайри тата совзаллă ытти государствăсенчи халăхсене пурне те Майăн 1-мĕш ячĕпе ăшшăн салам лаççĕ. «Халăхсен пурнăçĕ малалла кайсан—ирĕклĕ халăхсем çĕнтерни чĕлен килĕ»—тенĕ çав чĕнӳре.

Чĕнӳ Германири Италири рабочисене чĕнсе каланине пĕтерет. «Хăвăра тупаланчăкне тата тĕнчери ытти халăхсене те чуралантарма пăхакан диктатурăна сирĕнтерес прессинĕн шырапа пĕрлешĕве сирĕн те хутшăнмалла» тенĕ чĕнсе каланинче.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи профсоюзсем Майăн пĕрремĕш кунĕнче чĕнсе калани

НЬЮ-ИОРК, майăн 2-мĕш. (ТАСС). Америкăри ĕç федерацийĕнче тата производствăллă профсоюзсен конгресĕнче тăракан профсоюзсен Нью-Йоркри 51 организацийĕн представителĕсем Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе чĕнӳ пичетлесе кăларнă. Çав чĕнӳре совет ĕçсыннийĕсем çинчен асăнса: «вĕсем гитлерла Германин пĕтĕм вăй-хăватне хирĕç тăрса хăйсен çĕршывне питех те чаплăн хӳтĕлеççĕ» тесе çырнă. Профсоюзсем Хĕвеланăç фронтĕнчи тăшмана 1942 çулта çĕнтересишĕн вăя хурса кĕрешме чĕнеççĕ тата çапăçупа пĕрлех продукцисем ытларах кăларса, вăрçă материалĕсене фронта çитерсе тăма пулаççĕ.

Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи прогрессивлăй политикăллă организацисем Майăн пĕрремĕшĕнче хăçал çуллехи пек демонстрацисемпе парадсем туса ирттермен. Организацисем рабочисене Майăн пĕрремĕшĕнче ĕçлеме тата çак кунхи ĕçукçине Военнăй Заем илмелли фонда хурса, вăрçăра никек тӳсекен халăха пулăшма чĕннĕ.

—o—

Англи авиацийĕ Гамбург çине вĕçсе пырса тапăнни

ЛОНДОН, майăн 4-мĕш. (ТАСС). Англи авиаци министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: майăн 4-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем, Гамбург çине вĕçсе кайса, унти доксемпе суднăсем тăвакан верфьсене атакăланă. Бомбăсем пăрахнă хыççăн вăйлă пушарсем тухнă. Унсăр пуçне, Англи самолечĕсем подводнăй лодкăсен Сен-Назерти бази çине бомбăсем пăрахнă тата противникăн шывĕсенче минăсем ларта-ларта тухнă.

Истребительсемпе бомбардировщиксем Голландири, Бельгири тата Çурçĕр Францири аэродромсене атакăланă. Çав аэродромсем çинчен Германи авиацийĕ Англи çине вĕçсе пыра-пыра тапăнса тăнă. Çурçĕр Франци тĕлĕнче противникăн 2 бомбардировщикне персе антарнă.

Англи çыранĕсене хӳтĕлекен самолетсем Норвеги çыранĕсем патĕнче противникăн 2 суднине сиенленĕ тата çыррансем хĕррипчи пылай объектсем çине бомбăсем пăрахнă.

Çав асăннă операцисенчен Англин 5 бомбардировщикĕ каялла таврăнман.

Паян кăнтăрла Англин истребительнăй авиацийĕ Ла-Манш проливĕн районĕнче каллех аслă масштабпа наступленилле операцисем пуçласа янă.

Майăн 4-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Германи авиацийĕ Эксетер хули çине вĕçсе пырса çĕнĕрен бомбăсем пăрахнă. Чылаях пысăк сиенсем тунă, вилнисем не аманнисем те пур.

Сталин юлташăн Майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ çинчен ютçĕршывсенче мĕн çыраççĕ

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШӲЛЛЕ ШТАТСЕМ

НЬЮ-ИОРК, майăн 2-мĕш. (ТАСС). Сталин юлташăн Майăн 1-мĕшĕнчи приказне Америка пичечĕ пур ĕçсенчен те мала хурса çутатса тăрать. Нью-Йоркри чи пысăк хаçатсем паян Сталин юлташăн приказĕ пирки ятарласа çырнă статьясем пичетлесе кăларнă. «Нью-Йорк таймс» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла çырать: «Сталин приказĕ çитес вăхăтри тапăклă çапăçусенче кам çĕнеле тухассине Россия çирĕп шанса тăнине хăюллăн кăтартса паракан документ пулса тăрать». Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем Совет Союзне паракан пулăшу вăйланнăçемĕн вăйланса пĕр чарăнмасăр ӳсе пынине паллă туса, хаçат тата çав вăхăтрах çав пулăшăва нимĕнрен те ытларах вăйлатма кирлине кăтартса парать.

Нью-Йоркри «Сэн» хаçат çырнă тăрăх, Сталин юлташăн приказĕ боевой чĕнӳ пулса тăрать. Çав чĕнӳ совет халăхĕн, Совет Союзĕнчи рабочисемпе хресченсен пысăк хавхаланăвне татах та ытларах çĕклесси курăнсах тăрать. Малалла хаçат çакна палăртса çырать: Америка общественноçĕн пур сийĕсенче те Сталинăн майăн 1-мĕшĕнчи приказне пысăк интереспа çавтери тăрăшса вĕренеççĕ.

«Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат хăйĕн умстатьинче çакна палăртса çырать: Сталин юлташăн приказĕ гитлеризм хăрушлăхĕнчен тĕнчене çăлса хăварассишĕн кĕрешĕве тухнă халăхсен пĕрлĕхĕпе вĕсем пĕр шухăш-кăмăллă пулнине пур енчен те çирĕплетĕ, тет.

Пичет Вашингтонра пулса иртнĕ пресс-конференци çинчен калакан пĕлтерĕве пичетлет. Пресс-конференцире Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государственнăй секретарĕ Хэлл Сталинăн майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ ăна питех те кăмăла кайса хавхалантарни çинчен каласа панă.

Провинцисенче тухса тăракан хаçатсем: «Джорнал» (Провиденсра тухать), «Рекорд» (Филадельфире тухать) «Юнион» (Спрингфильдра тухать) тата ыттисем те приказра мĕн каланине чи малтанхи страницисенче туллин пичетленĕ. Хаçатсем нумайĕшĕсем чи кирлĕ малли вырăнсенче Сталин юлташăн сăнне пичетлесе кăларнă. Балтиморта тухса тăракан «Сэн» хаçат Сталин юлташăн приказне ăнлантарса парса çапла калать: «Çавăн пек пулса тăнă положенипе усă курма васкамалла. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Англия Совет Союзне ярса тăракан хĕçпăшал йышне татти-сыпписĕр ӳстерсе пымалла. Германие Хĕвеланăç Европăра хĕçпăшаллă пысăк вăйсем тытса тăмалла тумашкăн пирĕн мĕнпур вăя хурса ĕçлемелле, çапла майпа Германи çарĕсен чаçĕсене Совет Союзне хирĕç вăрçа кĕмешкĕн чарса тăмалла.

НЬЮ-ИОРК, майăн 3-мĕш. (ТАСС). Сталин юлташăн Майăн 1-мĕшĕнчи приказне сӳтсе-явасси Америкăри пичетре те, радиопередачăсенче те тĕп вырăнта тăрать. Приказ çинчен ятарласа çырнă умстатьяра Чикаго хулинчи «Сэн» хаçат çапла çырать: «Вилекен деспотизмăн мĕлкисем пĕр-пĕрипе тĕл пулнă Зальцбург масарĕ çинчи пек шăплăха хĕвелтухăçĕнчен, Мускавран килнĕ сасă, чăнлăх сасси сасартăк çурса ячĕ, унта Сталин 1942 çулта Гитлерăн çарĕсене тапăкланах аркатса тăкма хăйĕн çарĕсене приказ панă».

Америкăри паллă радиообозревательсем Сталинăн приказне анлăн сӳтсе яваççĕ. Паллă обозреватель Фостер Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Англие Совет Союзне мĕн вăй çитнĕ таран пулăшма чĕнет, мĕншĕн тесен «пирĕн вăрăм фронтра çавăн пек паттăррăн кĕрешнĕшĕн вырăссене пурин те тав тумалла», тет.

АРГЕНТИНА

НЬЮ-ИОРК, майăн 3-мĕш. (ТАСС). Аргентинăра тухакан хаçатсем Сталин юлташăн Майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ çинчен питĕ нумай çыраççĕ. «Ла насион», «Ла пренса» тата ытти хаçатсем те приказ çинчен тĕплĕн каласа паракан статьясене чи курăнмалли вырăнта пичетлеççĕ. Нумай хаçатсем тата приказ çинчен ятарласа çырнă статьясем кăлараççĕ.

КИТАЙ

ЧУНЦИН, майăн 3-мĕш. (ТАСС). Китай общественноçĕн тĕрлĕ сийĕсенче Сталин юлташăн Майăн 1-мĕшĕнчи приказĕпе питĕ те интересленеççĕ. Пур хаçатсем те Сталин юлташăн приказĕ çинчен тĕплĕн каласа параççĕ. Хăйсен статьисен заголовокĕсенче тата приказа ăнлантарса панисенче хаçатсем Хĕрлĕ Çарпа Совет Союзĕ 1942 çула гитлерла захватчиксене тапăкланах аркатса тăкмалли çулталăк туса хума шут тытнине уйрăмах палăртса параççĕ.

Сталин юлташăн приказне ăнлантарса парса, «Синьхуажибао» хаçат çапла çырать: «Сталинăн приказĕ Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă мĕнле пулса пынине тата вăл малашне мĕнле пулса пырассине питĕ лайăх анализ туса парать. Германи фашизмĕ кирек мĕн пулсан та поражени тӳсесси пурин шĕн те паллă, гитлерла чумана Совет Союзĕ çеç пĕтерсе лартма пултарать».

ШВЕЦИЯ

СТОКГОЛЬМ, майăн 3-мĕш. (ТАСС). Швецире тухакан хаçатсем Сталин юлташăн Майăн 1-мĕшĕнчи приказĕнчен нумай вырăнсене илсе пичетлеççĕ. Приказ умĕнчи заголовоксенче хаçатсем Сталин юлташ вăрçăн 10 уйăхĕ иртнĕ хыççăн Германи çарĕ малтанхинчен вăйсăртарах пулса тăни çинчен, Хĕрлĕ Çар — организованнăрах та вăйлăрах пулса тăни çинчен каланине уйрăмăнах лайăх палăртаççĕ. «Афтонтиднинген» хаçат çапла çирĕплетсе калать: «Вырăссем малашне пулас событисем çине пысăк шанчăкпа пăхаççĕ», тет. Çав хаçат совет войскисем калама çук лайăх хĕçпăшалланнине палăртать, вăл уйрăмах тата Сталин юлташ 1942 çул нимĕçсен фашистла захватчикĕсене тапăкланах çĕнтермелли çулталăк пулса тăмалла тесе каланине астутарать.

Иранри пичет Совет Союзĕ Ирана пулăшни çинчен

ТЕГЕРАН, майăн 2-мĕш. (ТАСС). Тегеранра тухса тăракан пур хаçатсем те хăйсен малтанхи страницисенче саранчана хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе пынă Совет экспедицийĕ ĕçлеме тытăнни çинчен пĕлтереççĕ. Хаçатсем Ирана çав экспедици пынине çакăн пек хакласçĕ: экспедици килни вăл — Совет Союзĕ Иранпа кăмăлтан туслашса пурăннине кăтартакан татах та тепĕр çĕнĕ факт пулса тăрать, çав факт икĕ çĕршыв, пĕр-пĕрипе тунă союзлă договорта каланă пек, пĕр-пĕрипе таччăн çыхăнса килĕшӳллĕ ĕçленине кăтартать.

«Сетаре» хаçат çав пĕлтерĕве ăнлантарса панă май çапла çырать: «Пирĕн ялхуçалăхне сиенлекен саранчана хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе Совет Союзĕ паракан пулăшăва иранецсем тав туса йышăнаççĕ. Иран халăхĕ Совет Союзĕн пулăшăвне нихăçан та манмĕ. Совет Союзĕ Ирана ялхуçалăх тĕлĕшпе пĕрре кăна мар пулăшнă».

«Эттелаат» хаçат çакна паллă туса çырать: «Совет специалисчĕсем иранецсене ĕнтĕ пĕр хутчен кăна мар пулăшнă. Вĕсем иранецсене ялан чи кирлĕ вăхăтра чунтан пулăшса пынă. Çакă вăл — кӳршĕллĕ икĕ государство пĕр-пĕрипе чăннипех туслăн çыхăнса ĕçлени пулать».

ТЕГЕРАН, майăн 3-мĕш. (ТАСС). Совет Союзĕ панă 1.000 тонна тулă Ирана çитнĕ. Ку тулă пĕтĕмпех Тегерана каять. Тата 500 тонна çитесси кĕтеççĕ.

Сент-Омер тата Кале çине вĕçсе пырса тапăнни

ЛОНДОН, майăн 2-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Англи авиацийĕ Çурçĕр Франци çине темиçе хутчен те вĕçсе кайса тапăннă. Сент-Омерта вокзалпа чугунçулăн сортировочнăй станцине атакăланă, çавăн пекех тата Калере те чылай объектсем çине бомбăсем пăрахнă.

БОЛЬШЕВИКЛА ХАÇАТ ФАШИСТСЕН ТЫЛĔНЧЕ

СМОЛЕНСК ОБЛАÇĔН Н. РАЙОНĔ, майăн 4-мĕш. (ТАСС). «Юлташсем! Фашистла мерзавецсем пирĕн аттесене пиччĕшĕллĕшсене, аннесене, йăмăксене, пĕчĕк ачасене вĕлереççĕ. Хамăр юлташсен вилĕмĕн тавăратпăр! Алла пăшал тытăр та хăвăрăн ялăрсене, хăвăрăн пилĕксене, хăвăрăн пурнăçăра сыхлама тăрăр. Тăшман аллинче чура пулса пурăниччен ăна хирĕç кĕрешсе вилни аванрах».

Çакăн пек чĕнӳллĕ сăмахсемпе пуçланать Н. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ кăларнă листовка. Çак листовка алăран алла куçса çӳрет. Çак чĕнӳ çулăмлă сăмахĕсем пайтах этемĕн чĕрине кĕрсе вырнаçнă. Ялсенче самооборона отрячĕсем организациленнĕ, вĕсем нимĕç захватчикĕсене чылай ялсоветĕсенчен хĕссе кăларнă, çĕрте партизансене пулăшнă.

Листовкăсене партизансен кашни отрядĕнче пекех кăлараççĕ. Вĕсем нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешмелли хаяр хĕçпăшал пулса тăраççĕ. Çав листовкăсенче партизансем фашистсен намăссăр суйăвне тăрă шыв çине кăлараççĕ, вырăнти халăха фашистсене хирĕç организованнăй саботажсем тума чĕнеççĕ. Боевой листоксем ăçта пăхнă унта курăнаççĕ. Вĕсене колхозниксен кил-çурчĕсем çумĕнче, пусă пурисем çинче тата нимĕç влаçĕсем приказсемпе пĕлтерӳсем çапакан хăмасем çинче те сайра мар курма пулать.

З. ялĕнче нимĕç комендачĕ приказ кăларнă. Ялта пурăнакан кашни çынна кăтартса панă чухлĕ ăшă тумтир пама хушнă. Тепĕр темиçе сехетренех çав приказпа юнашар партизансен майлă çырса кăларнă листовки çакăнса тăнă.

«Юлташсем, нимĕç йыттисене ăшă тумтирсем ан парăр, вĕсене нимĕçсенчен аяккарах пытарăр. Гитлерла мерзавецсем шăнса вилччĕр!»

Ялта пурăнакансенчен никам та ăшă тумтирсем паман. Фашистсем шухăшлани ахалех путланнă.

Çав листовкăсем урлă партизансем вырăнти халăха мĕнле те пулин ниçтек килсе тухсан, харпăрхăйне мĕнле тытмалли çинчен канашсем параççĕ. Совет çĕршывĕнче мĕн пулса иртни çинчен пĕлтереççĕ.

Х. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ апрель уйăхĕнче «Колхозник çулĕ» ятлă хаçат кăларма пуçларĕ. Вăл хаçат Гитлерăн тарçисене сахал мар тăрмавсем курет. Анчах тем тĕрлĕ тискерле мерăсем йышăнсан та, пичетлесе е алăпа çырса кăларакан хаçатсемпе листовкăсем урлă халăх умне илсе çитерекен большевикла чăнлăха фашистсем нимĕн те тăваймаççĕ.

Ленинградра Майăн 1-мĕш ячĕпе пулнă радиомитинг

Нимĕç захватчикĕсен йыттисене хирĕç хаяр çапăçура кĕрешсе пиçĕхнĕ геройла Ленинград ĕçхалăхĕ çуркуннехи ĕç уявне тăшмана çапса аркатма хатĕр тăракан çар çыннисем пек кĕтсе илчĕ.

Майăн 1-мĕш кунĕнче Ленинград çыннисем, Совет Союзĕнчи ытти ĕçхалăхĕ пекех, Хĕрлĕ Çар валли çĕнĕ хĕçпăшал туптаса хатĕрлес тесе хăйсен куллехи ĕçĕсене тухрĕç, вĕсем нумайрах тупă, снарядсем, минăсем парас тесе тăрăшса ĕçлерĕç. Майăн 1-мĕшне Ленинград ĕçсыннийĕсем хăйсен ĕçри çĕнтерĕвĕсемпе кĕтсе илчĕç, вĕсем тăван çĕршыва хĕрӳллĕн юратнине, хĕрлĕ воинсене пулăшма мĕнпур вăйран хатĕр тăнине кăтартрĕç. Оборона Халăх Комиссарĕн, совет халăхĕн аслă çулпуçĕн Сталин юлташăн Майăн 1-мĕш ячĕпе панă приказĕнчен Ленинград ĕçсыннисем ылханлă нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешме çĕнĕ вăй илчĕç.

Митинга ĕçсыннин депутачĕсен Ленинград хула Совечĕн Исполком председателĕ Попков юлташ уçрĕ.

Ленинград фрончĕн Военнăй Совечĕ ячĕпе митингра фронт командующийин заместителĕ генерал-майор Гусев юлташ сăмах каларĕ. Вăл Хĕрлĕ Çарăн герой-боецĕсем çинчен, герой-партизансем çинчен, Ленинград хулинчи герой-рабочисем çинчен каларĕ. Ленинград стенисем патĕнче тăшман чĕрĕ вăй енĕпе те, техника енĕпе те питĕ пысăк сухатусем тӳсе халь каялла чакать.

— Çак кĕрешӳрен, — тет вăл, — Ленинград çыннисем, пирĕн фронтăн боецĕсем татах та ытларах çирĕпленсе, пиçĕхсе те пĕтĕçсе тухрĕç. Пирĕн фронтăн войскисем умĕнче тăшмана чи кĕске вăхăтра çапса аркатас задача тăрать. Ку задачăна пурнăçлатпăрах!

Ун хыççăн Карл Маркс ячĕпе тăракан заводăн стахановецĕ Можайский юлташ, Совет Союзĕн Геройĕ майор Петров юлташ, Хĕрлĕ Ялавлă Балтика представителĕ Гвардейски экипаж командирĕ, 3-мĕш рангри капитан Левченко юлташ, Ленинград облаçĕн тата хула комсомол комитечĕн секретарĕ Иванов юлташсем тухса сăмах каларĕç.

Нимĕç захватчикĕсене çапса аркатма пĕр пăрахми тĕллев лартнă, халăх юратăвĕпе хавхаланакан Ленинград çыннисен сăмахне пĕтĕм çĕршыв эфир тăрăх илтерĕ.

Тăшмана çапса аркататпăрах! (ТАСС).

Профсоюзсен массăллă спорт мероприятийĕсем

ВЦСПС профсоюзсен 1942 çулти массăллă спорт мероприятисен планне çирĕплетнĕ.

Çак çулти майăн 7-мĕшĕпе июнĕн 21-мĕш хушшинче пулса иртекен профсоюзсен кросĕсĕр пуçне, профсоюзсен спорт обществисем июль уйăхĕнче фабрикăсемпе заводсенче çăмăл атлетика тĕлĕшпе, шывра ишес, футболла, баскетболла тата волейболла выляс енĕпе комплекслă спартакиадăсем туса ирттереççĕ. Июль уйăхĕнчех командăсемпе шыв урлă каçас енĕпе туса ирттерекен ăмăртусем пулаççĕ.

Август уйăхĕнче алă вĕççĕн тытăçса кĕрешес тата чăрмавсене çĕнтерсе илес тĕлĕшпе ăмăртусем пулаççĕ. Октябрь уйăхĕ валли Октябрьти революци XXV çул тултарнă ятпа комсомолпа профсоюзсен военизированнăй кросне туса ирттерме палăртнă. Ноябрь уйăхĕнче гимнастикăллă ăмăртусем тата хуласенчи командăсем хушшинче шывра ишес тĕлĕшпе, çăмăл атлетика енĕпе спорт вăййисемпе ăмăртусем ирттерме палăртса хунă.

(ТАСС).

Профсоюзсемпе комсомолăн çуллахи кросĕ

ВЦСПС тата ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕ халăхăн анлă сийĕсене вăрçă ĕçне тата физкультурăна вĕрентсе хатĕрлес шутпа 1942 çулти майăн 7-мĕшпе июнĕн 21-мĕш хушшинче профсоюзсемпе комсомолăн çуллахи массăллă иккĕмĕш кросне туса ирттерме йышăннă.

Кроса ирттерес ĕçе ертсе пыма ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн секретарьне Романов юлташа оргкомитетăн председателĕ пулма уйăрнă. Районсенче, хуласенче, облаçсенче, крайсенче тата республикăсенче вырăнти оргкомитетсене уйăраççĕ. (ТАСС).

—o—

Учительсем активлăн хутшăнаççĕ

ЕТĔРНЕ. (Телефон тăрăх). «Народный учитель» ятлă танксен колоннине тума Етĕрне районĕнчи учительсем 7755 тенкĕ панă. Çак шутран 1323 тенкине Етĕрне педучилищинчи преподавательсем, 1260 тенкине Етĕрнери вăтам шкулта вĕрентекенсем хăйсем хушшинче пухнă.

А. КРАСНОВ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

КОЗЛОВСКИЙ КОМБИНАТ

на Волге принимает в спиловку лес в неограниченном количестве от организаций и колхозов. Возможно с последующей обработкой (стружка, шпунтовка).

Телеграфный адрес:
Козловка ЧАССР Волга.
ЗАВОДОУПРАВЛЕНИЕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 6—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 6—85, издательстве конторин — 6—2.

НК 131 — Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 266. Ф. 6. 58 64 п. зн.